**Никита Яковлевич Бичурин ăсчахăн Раççей наукинчи вырăнĕ пысăк шайра: XIX ĕмĕрте халăха çутта кăларас ĕçре палăрнă ятсен хушшинче те пур вăл, тухăçа тĕпчекенсен ретĕнче те Иакинф манах чи малта тăрать, темиçе томран тăракан китайла-вырăсла сăмах пуххин пĕрремĕш авторĕ те вăлах. Тухăçри чĕлхесенчен куçаракан тăлмачсем те Никита Яковлевич шайне çитме пултарайманнине пĕлетпĕр, Европăри синологсем те чи малтан унăн ятне асăнаççĕ.**



# РАÇÇЕЙĔН ЧАПЛĂ ĂСЧАХĔ

Н.БИЧУРИН 1777 çулта çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче /авăн уйăхĕн 9-мĕшĕ/ Типнер ялĕнче /Акулево, Шупашкар уесĕ, Хусан кĕпĕрни/ Якку пуп çемйинче çуралнă. 14 çул Хусанти тĕн академийĕнче ăс пухнă /1798 çулччен семинари пулнă/. Вĕренӳре ӳсĕмсемпе палăрнă. Грамматика, синтаксима, поэзи, риторика, философи тата богослови класĕсенче тарăн пĕлӳ илнĕ. 20 çулта вара манах пулса тăнă, Иоанн мăнастирĕнче настоятель тивĕçне пурнăçланă. Çав вăхăтрах Хусанти тĕн академийĕнче вĕренекенсене илемлĕ каласма хăнăхтарнă. 1802 çулта вара Иакинф Бичурин манаха Иркутск хулине арçынсен Вознесени мăнастирĕнче настоятельте, семинаринче ректорта ĕçлеме янă.

1807 çулта Таса Синод Иакинф архимандрита Китая тĕн миссийĕн ертӳçи пулса каймашкăн хушнă. Пекин хулине çитнĕ-çитменех Бичурин китай чĕлхине вĕренме тытăннă. Пилĕк çулта вунă пин иероглиф пухнă вăл. Вĕсене хăй палăртнă йĕркене кĕртнĕ, кашни паллăн пĕлтерĕшне шыраса тупнă. Çапла майпа китай чĕлхин çырулăхĕн вăрттăнлăхне алла илнĕ. Калаçас енĕпе те, çырассипе те тухăçри пуян чĕлхине пĕлекенсенчен чи пултарулли пулнă. 14 çула яхăн Китай çыннисемпе килĕштерсе пурăннă ăсчах. Халăхне те, чĕлхине те чун-чĕререн юратнă вăл. Хăйне те кашни утăмрах пулăшнă кунта. 1821 çулта Иакинф манах тăван çĕршыва таврăнма çула тухнă. Гоби пуш хирĕ тăрăх мисси ертӳçи хыççăн вăрăм караван анăçалла шунă: тĕпчевçĕ Раççее пурçăн та, фарфор та, тар /порох/ та илсе çитерессишĕн çунман. Вун пилĕк тĕве çине 400 пăт кĕнеке, ал çыру, географи картти, ӳкерчĕк тиенĕ вăл. Çак пуянлăха ăсчах Пекин хулинче кунĕн-çĕрĕн пуçтарнă, пасарсенче, кĕнеке лавккисенче хăйĕн укçипе туяннă. Тăван çĕршыва усă парас тивĕçе çапла ăнланнă манах.

Питĕре таврăнсанах ăна миссионер ĕçĕнче "йăнăшсем" тунăшăн çирĕп явап тыттарнă: Таса Синод Иакинфа Валаам утравĕ çинче вырнаçнă мăнастире ăсатнă. Виçĕ çул иртнĕ хыççăн сумлă çынсем, Н.Бичурин Китай культурипе чĕлхине пĕлнине кура, I Микулай патша патне кайса тĕпчевçĕ хутне кĕрсе тархасланă. Император вара: "Иакинф Бичурин манаха Ази департаментне илес", – тесе хушу кăларнă.

1826 çулта ăна Валаам мăнастирĕнчен Александр Невский лаврине куçарнă. Çак самантран тĕпчевçĕн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнă: тухăçлă ĕçе кӳлĕннĕ вăл. Анлă та тарăн пĕлӳллĕ ăсчах çирĕм çулта 70 ытла пысăк ĕç çырса хатĕрленĕ: философи, истори, географи, этнографи, социологи ыйтăвĕсене Китай, Тĕп тата Тухăç Ази культурисем урлă çутатнă, упранса юлнă вăйхăватне халăха парнелеме ĕлкĕрнĕ. Ырă çынсем Бичурина кĕнекесем кăларма пулăшнă. Сăмахран, "Тибет çинчен çырса кăтартни" кĕнеке З.Волконская княгиня пулăшăвĕпе кун çути курнă. Çакна шута илсе автор хăйĕн ĕçне ăна халалланă, кĕнеке хуплашкин тепĕр енче княгиня ятне асăннă. Александр Пушкин поэт та çак парнене тивĕçнĕ вăхăтĕнче. Ăна Бичурин çак сăмахсемпе хисеп тунă: "Чыслă та хисеплĕ ырă çыннăмăра Александр Сергеевич Пушкина тăлмачран чунчĕререн тав туса". Кĕнекесен пĕр пайне нимĕç тата француз чĕлхисене куçарнă. Çапла вара Бичурин Европăра чапа тухнă.

1828 çулта тухăçа тĕпчес ĕçре пархатарлă ĕçсемшĕн Наукăсен император академийĕ Никита Яковлевича хăйĕн член-корреспондентне суйланă, француз ăсчахĕсен ушкăнĕ ыйтнипе 1831 çулта ăна Парижри Ази обществин чăн членĕ пулма палăртнă. Тăватă хутчен вăл Раççейĕн чи чаплă ăслăлăх парнине – Демидов ячĕллĕ премие – Академи сĕнĕвĕпе килĕшӳллĕн тивĕçнĕ. Чи малтан унăн "Ойротсемпе калмăксен историне тишкерни" кĕнекине палăртнă.

1830-1832 тата 1835-1838 çулсенче Бичурин Çĕпĕре экспедицие ушкăнпа кайса килнĕ. Буряти çĕршывĕнче Кяхта хулинче китай чĕлхин шкулне уçнă, Байкал леш енчи çĕршывра декабристсемпе тĕл пулусем иртнĕ. Уйрăмах Николай Бестужевпа туслашнă.

Питĕр хулинче пурăннă çулсенче Бичурин тăтăшах Владимир Одоевский княçăн литература салонне çӳренĕ, Раççей культурин чи чаплă çыннисемпе хутшăннă: А.Пушкинпа, В.Белинскипе, И.Крыловпа, А.Герценпа, И.Панаевпа, М.Глинкăпа. Хăй те литература ĕçне явăçнă. Н.Веселовский историк-ориенталист ун пирки çапла çырнă: "Шăпах çак тапхăрта литература енĕпе Бичурин канăçсăр ĕçлеме пуçлать, Раççейри ăсчахсене кăна мар, чикĕ леш енчи ăслай тĕнчине тĕлĕнтерет".

Куçарусем, очерксем, тавлашуллă статьясем çырнă Н.Бичурин. Вĕсем хамăр çĕршывра та, ютра та кун çути курнă. Европа ăсчахĕсене тĕпчевçĕ Китая кая юлнă, вăрă-хурах çĕршывĕ евĕр кăтартнăшăн питленĕ, Раççей ориенталистикине мăнаçлăн хӳтĕленĕ.

Бичурин пурнăçĕн юлашки çулĕсенче Мурино ятлă пысăк ялта /унăн хуçи Воронцов граф пулнă/ ĕçленĕ. Тусĕн А.Карсунскин дачинче, хула тулашĕнчи шăплăхра, китайла çырнă сĕм авалхи ал çырусене куçарнă.

Александр Карсунский ачин хĕрĕ Н.Моллер аса илĕвĕсенче çапла çырса хăварни пур: "Иакинф атте Муринăра чыслă та хисеплĕ çын пулнă. Ваттивĕтти те, дача хуçисем те, хресченсем те пĕлнĕ ăна. Хресченсем Иким атте тесе чĕннĕ. Ăна халалланă халапсене паян та пĕлеççĕ кунта. Ырă кăмăллă пулнăран пурне те пулăшнă вăл. Чирлисене, пĕччен пурăнакансене укçапа тивĕçтернĕ. Хăй килĕштернĕ, чухăна юлнисене уявра кĕмĕл укçа парнеленĕ. Муринăри хресченсем кăна мар, сывăхри ялсенчен те çӳренĕ ун патне, пулăшу ыйтнă. Кăшнинех тивĕçтернĕ вăл. Мурино ялĕнче те, таврара та лайăх пĕлнĕ ăна, хисепленĕ, юратнă".

Иакинф атте 76 çула çитсе Александр Невский лавринчи пĕчĕк пӳлĕмре 1853 çулта çу уйăхĕн 11/25/-мĕшĕнче ĕмĕрлĕхех куçне хупнă.

Александр Невский лавринчи XVIII ĕмĕрти некрополĕнчи палăк çинче китайла иероглифсемпе çырнă сăмахсем курма пулать. Эпитафин тупсăмне тупма йывăр, хура гранит çине çапла кăна çырнă: "Ĕмĕр-ĕмĕр тăрăшса ĕçленĕ, унăн аваллăха халалланă мухтава тивĕçнĕ ĕçĕсем манăçа тухмĕç". Çак палăк Иакинф Бичурин манах вил тăприйĕ çинче упранать.

Аслă манах ячĕ унăн вилĕмсĕр ĕçĕсенче пурăнать. Китай, монгол, тибет, калмăк тата тухăçра пурăнакан ытти халăхсен аваллăхĕ çинчен хыпарлаççĕ вĕсем. Ун чухлĕ çĕнĕлĕх урăх ниçта та тупаймăн. Никита Бичурин ĕçĕсен хакĕ нихăçан та чакас çук, мĕншĕн тесен тĕнче культуришĕн вĕсем çав тери хаклă.

Педагогика наукисен докторĕ Геннадий Волков профессор каланă тăрăх, ентешĕмĕре Калмăкра та хаклаççĕ. Кунта унăн тĕпчев ĕçĕсене çĕнĕрен пичетлесе кăлараççĕ. Кашни шкул вулавăшĕнчех Н.Бичуринăн "Ойротсемпе калмăксен историне тишкерни" кĕнекине курма пулать. "Ăна темиçе хутчен те çĕнĕрен пичетленĕ калмăксем. 1991 çулта тепĕр хут кун çути курнăскер 10 пин тиражпа вулакан патне çитнĕ, – пĕлтерет Г.Волков профессор. – Раççейре калмăксем вара 180 пинрен ытла мар. Чи сумлă кĕнекисене Иакинф атте пурлăхĕпе пĕрле Хусанти тĕн академине парнелесе хăварнă. Вĕсен шутĕнчех "Атăлçи калмăкĕсем" кĕнеке те пур".

Тепĕр кăсăк самантпа паллаштарас килет вулаканăма. "Çур ĕмĕр каялла Бичурин çинчен хам сахал пĕлнине пытармастăп, – тет Геннадий Никандрович. – 1956 çулта Парижри университетра тухса калаçнă май ентешĕмĕр пирки икĕ-виçĕ предложени çеç калама пултарнă эпĕ. Çавăнпа та хамăн вĕренекенĕмпе Т.Петрова профессорпа мухтанатăпах. 2004 çулта Пекин университетĕнче ректорсен канашлăвĕнче Н.Бичурин пирки доклад турĕ вăл. Ректорсем ăна хисеплесе ларса мар, тăрса итлерĕç".

Çапла, чăннипех хаклаççĕ пирĕн ентеше – Иакинф аттене – çĕр чăмăрĕ çинче. Çак чыса вăл хăйĕн ĕçĕсемпе тивĕçнĕ. Ахальтен мар Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çырнă йĕркесем чăнах килеççĕ:

Хăрушă ĕмĕрте çĕклерĕн эсĕ
Тăван Российăн чăн ăслăлăхне.
Пур халăхшăн та çĕнĕрен эс уçрăн
Пуян ăс-халлă Ази алăкне.

**Питĕрти чăвашсен "Янташ" хаçачĕпе тата унăн кĕнекипе усă курса хатĕрленĕ.**